Шĕнер Ишек территори пайĕ

#регпроекты #нацпроекты

ПАЯНХИ ЯЛ

Проект Вăрнар муниципаллă округĕ пулăшнипе пурнăçа кĕрет

Шĕнер Ишек территори пайне çак ялсем кĕреççĕ: Шĕнер Ишек, Чăрăш Ишек, Ишлĕ, Шуркасси Ишек

Пысăк ĕççем пĕрлĕхе çирĕплетеççĕ

Р.Убаков ял хастарĕсемпе.

Молодежная урамри çĕнĕ çул.

Пĕвене тасатаççĕ.

Хулара тач тĕпленсе пурăнакансене ял тесенех, ахăртнех, пылчăкпа çăрăлакан урамсем, кивĕ-çĕрĕшнĕ çуртсем куç умне тухаççĕ. Анчах та çакă пĕрре те чăнлăхпа килĕшсе тăмасть. Юлашки çулсенче ялсем те аталану çулĕ çине тăнине, халăх лайăхрах та лайăхрах пурăнма тăрăшнине курма тивет: территорисем хăтлăланаççĕ, çĕнĕ пӳртсем çĕкленеççĕ.

Шĕнер Ишек территори пайĕнче те ырă улшăнусем куç умĕнчех. Кунта, тӳрех каламалла, çав тери хастар та маттур çынсем пурăнаççĕ.

Территори пайĕ пысăк мар, вăл тăватă яла кăна пĕрлештерет. Вĕсенче 887 çын пурăнать. Кил хуçалăхĕсем 624 шутланаççĕ.

– Паллах, ытти çĕрти пекех çамрăксем шкул хыççăн пурте ялта тытăнса юласшăн мар. Вĕсене пысăк хуласен пурнăçĕ ытларах илĕртет. Çавăнпах та пулĕ ялсенче пӳртсем те пушанаççĕ, кунашкаллисем пирĕн 192. Анчах та çакă савăнтарать: çулланнă çынсем вара хулара пурăннă хыççăн каялла тăван тăрăха таврăнаççĕ. Акă, Шуркасси Ишекри пĕртăван Николаевсем çемйисемпе яла куçса килчĕç, çĕнĕ пӳртсем хăпартса лартрĕç. Кашни çĕнĕ çурт çĕкленни кăмăла çĕклет, капла ял сӳнмест-çке. Сăмах май, юлашки вăхăтра, нумаях мар пулин те, пирĕн тăрăхра пилĕк çĕнĕ капмар çурт хăпарса ларчĕ, – кăмăллăн пĕлтерчĕ Шĕнер Ишек территори пайĕн пуçлăхĕ Радим Убаков.

– Ял çыннисен ытлашшиех ӳпкелешмелли çук. Пысăк хăвăртлăхпа мар пулин те, ял территорийĕнче сумлă ĕçсем пурнăçланаççĕ, – хушса хучĕ вăл.

Чăн та, кунта çулсеренех ял урамĕсене пĕчĕккĕн вак чулпа хытараççĕ. Пĕлтĕр, сăмахран, «Хăрушсăр пахалăхлă çулсем» наци проекчĕпе килĕшӳллĕн Шĕнер Ишекри Песчаная урамра 370 метр çула юсама май килнĕ. Çавăн пекех ку ялти Молодежная урамри 200 метр çул та çĕнелнĕ. Кунти ĕççене Алина Ефимова предприниматель пурнăçланă.

Тепĕр подрядчик А.Кичаев Шĕнер Ишекри Клубная урамăн 130 метр пайне тата Шуркасси Ишекри Тĕп урамран Гражданская урам таран тăсăлакан çул пайне – 160 метр – вак чул сарса юсанă.

«Шĕнер ен» ушкăн.

– Тĕрĕссипе, çулсене юсасси тата çĕнетесси – пирвайхи задачăсен йышĕнче. Юрать, юлашки çулсенче ку енĕпе паттăлăхăн тĕрлĕ пулăшу программисем, наци проекчĕ ăнăçлă ĕçлеççĕ, – пĕлтерет Радим Убаков.

Ял çыннине пĕве те сывлăш пекех кирлĕ. Чи малтанах – пушар хăрушсăрлăхне тивĕçтерме. Çавăнпах та ку ыйтăва та тимлĕхе илнĕ территори пайĕнче. Ăшăхланнă, типнĕ шывсен çивĕчлĕхĕ халăха та шухăшлаттарнă. Çавăнпах ĕнтĕ «Пуçарулла бюджет» программăна кĕрсе вĕсем чи малтанах çак ĕçе пурнăçлама шут тытнă. Результачĕ паха! Виçĕ çулта Шĕнер Ишек тăрăхĕнче пурăнакансем республика, Вăрнар округĕ пулăшнипе, ял çыннисем укçа-тенкĕ хывнипе пилĕк пĕвене тасатса тарăнлатма пултарнă! Виçĕмçул – Чăрăш Ишекри лавкка çумĕнчине. Пĕлтĕр Чăрăш Шĕнерти виçĕ пĕвене – пĕтĕмпе 1 млн та 260 пин тенкĕлĕх. Кăçал – Шĕнер Ишекре.

Халăх сывлăхĕ те тимлĕхрех. «Сывлăх сыхлавĕ» наци проекчĕн тата регионти «Пуçламăш медицинăпа санитари пулăшăвне аталантарасси» программăпа килĕшӳллĕн Шĕнер Ишек территори пайĕнче виçĕ çĕнĕ ФАП хута кайнă. Ку ял çыннишĕн уйрăмах кирлĕ утăм. Пирвайхи медицина пулăшăвне илме инçе çула тухмалла мар-çке. Çитменнине, хальхи вăхăтра врачсем те ялсене тăтăш тухса çӳреççĕ. ФАП-сем пурри чирсен профилактики енĕпе те тухăçлă ĕçлеме май парать.

Ку тăрăхра пурăнакансем тăрăшуллă, пĕрлĕхлĕ пулни тата çак ĕçсеннен те аван курăнать. Ял хастарĕсен пуçарăвĕпе, акă, çывăх çыннисем канлĕх тупнă вырăнта кашни ялта масар çурчĕсене туса лартнă, кунта субботниксене тăтăшах йĕркелеççĕ.

Тăван çĕршыв паттăрĕсем умĕнче те пуçа таяççĕ шĕнер-ишексем: ялсенчи палăксемпе обелисксене тирпейлĕхре тытаççĕ, вĕсем çывăхĕнче чечексем лартса ӳстереççĕ.

Хăйсем пĕрлĕхлĕ пулнине ку тăрăхрисем кăçал тепĕр пархатарлă ĕçре те кăтартрĕç. Вĕсем пĕрле пухăнса СВО-на хутшăнакан салтаксем валли маскировка сеткисем çыхрĕç. Ку енчен неофашистсемпе паян çичĕ каччă кĕрешет.

Патриотизм пирки калас-тăк, шĕнер-ишексем ăна чунсене хывакан мероприятисем тăтăшах йĕркелеççĕ. Акă, Германи çарĕсен ветеранĕсен тĕлпулăвĕ кашни çул кунта иртет. Анатолий Васильев пуçарнипе унта республикăн тĕрлĕ кĕтесĕнчен, ытти регионсенчен 100 ытла çын килет.

«Шĕнер ен» пултарулăх ушкăнне паян республикипех аван пĕлеççĕ. Олег Семеновпа Роза Константинова ертсе пыракан коллектива хамăр округра кăна мар, ытти регионсенче те хапăл тăваççĕ. Ăнсăртран мар. Вырăнти артистсем – унта тĕрлĕ ӳсĕмри, тĕрлĕ професси çыннисем пуçтарăннă – чăваш халăх культурине те сăнлаççĕ, патриотизма та пысăк тимлĕх уйăраççĕ. Нумаях пулмасть вĕсем СВО паттăрĕсене халалласа «Ĕмĕр сакки сарлака» телепередачăна хутшăнчĕç. Шупашкарти Çĕнтерӳ паркĕнче «Катюша» юрра чăвашла янраттарчĕç. Çавăн пекех «Юрла, салтак, юрла!» юрăпа та тыткăнларĕç.

– Хамăрăн юратнă тăрăхра пурăнакан кашни çынна чĕрен тав тăватăп. Вĕсем пуррипе эпир патшалăх программисене, наци проекчĕсене пурнăçа кĕртетпĕр. Пĕрле яла çĕклессине хамăр вăя хыватпăр. Малалла та алла-аллăн тытăнса пĕр шухăшлăн тимлесчĕ, – тав турĕ Радим Убаков.

Светлана ЧИКМЯКОВА.

Роза КОНСТАНТИНОВА:

– Ялта пурăнма май çук текенсем питĕ йăнăшаççĕ. Пирĕн тăрăхра, акă, ĕçчен, уçă кăмăллă çынсем пурăнаççĕ. Пуçарулла та хастар активистсем кашни ялтах пур. Вăл е ку ĕçе тумалла-и – халăх тӳрех кар тăрать. Мĕнле лайăх вĕт ку! Пĕр çыхăнура пулмалла та. Ку мана пырса тивмест, кăна ман тумалла мар тенипе ĕç тухмасть. Кун пек нихăçан та малалла каяймастăн. Эпир, ак, пĕрле ял хăтлăхĕшĕн те тăрăшатпăр, тĕрлĕ мероприятисене те хастар хутшăнатпăр, куракансене концертсемпе савăнтаратпăр. Çулла, ак, пурте пĕрле хамăр салтаксем валли маскировка сеткисем çыхрăмăр. Ырă ĕçе нумайăшĕ хăйĕн тӳпине хывма тăрăшрĕ. Пурне те тав!